Сурăм енче

# Панкли музейĕ 10 çул тултарчĕ

Ытлари кун Панклири историпе краеведени музейĕ 10 çул тултарчĕ. Уява килнĕ хăнасене Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.Н. Иванов, музей ертӳçи Н.Н. Яковлева, çак музее пуçласа йĕркелекенĕ Н.Л. Яковлев ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çар мухтавĕн, тăван ен тата хуçалăх историйĕн залĕсен экспоначĕсемпе ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.Л. Яковлев паллаштарчĕ. Вăл тăрăшнипе ĕнтĕ 10 çул каялла ялти музей уçăлнă. Кунти хуçалăх ертӳçин П.П. Давыдовăн та тăван ен историйĕпе, унăн пултаруллă та ĕçчен çыннисемпе паллаштаракан музей уçас шухăш тахçанах тĕвĕленнĕ. Вăл пултаруллă ентеше çул уçса парса пынă та.

Сурăм тăрăхĕ чăннипех те талантлă çынсемпе пуян. Кунта пĕрремĕш чăваш “Шыв арманĕ” опера авторĕ Федор Васильев композитор çуралнă. Юрий Скворцовпа Кăтра Мишша çыравçăсем те кунтан тухнă. Александр Ильинпа Виталий Гордеев юрăçсем те Сурăм тăрăхĕнче вăй илсе çĕкленнĕ. Уйрăм çынсен, çемьесен, ялсен пурнăç



çулĕ те – районăн, республикăн историйĕ те. “Ударник” хуçалăхăн сулмаклă утăмĕсене манма юрать-и вара.

Уява Панкли клубĕнче ирттерчĕç. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева уçрĕ, Н.Л. Яковлев музее йĕркелени тата вунă çулхи тапхăр çинчен каласа пачĕ. “Ударник” хуçалăх ертӳçи П.П. Давыдов та тăван ен историне упрасси çинче чарăнса тăчĕ.

Уяв ячĕпе район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăваш наци музейĕн ертсе пыракан специалисчĕ Т.Н. Орлова, ЧР халăх академийĕн президенчĕ П.П. Таллерова, Расçей тава тивĕçлĕ тата Чăваш халăх художникĕ Н.П. Карачарсков тата ыттисем саламларĕç.

Уяв ачасем кăтартнă концертпа вĕçленчĕ.

**А. ИВАНОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Панкли музейĕнче Н.П. Карачарсков тата Н.Л. Яковлев.**

Врач асăрхаттарать

# СПИД – хăрушă чир

Кашни çулах май уйăхĕн виççĕмĕш вырсарни кунĕнче СПИД чирĕнчен вилнисене асăнмалли пĕтĕм тĕнчери кун иртет. Çак куна халалласа пур çĕрте те уйăхлăх ирттереççĕ. Çавăнпа та кăштах çак чир çинчен вулакансене аса илтерес килет.

Чăваш Республикинче 2007 çул тĕлне ВИЧ-инфекци лекнисен шучĕ 724 çынна çитнĕ, СПИД чирĕпе чирлекенсен шучĕ Элĕк, Çĕмĕрле, Канаш районĕсенче тата Канашпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче нумай.

Кăçалхи 3 уйăх хушшинче çĕнĕрен 28 СПИД вирусĕ ернĕ çынна тупса палăртнă. Иртнĕ çулсенче ВИЧ-инфекци ернĕ çынсем ытларах наркомансем хушшинче пулнă пулсан, кăçал ар çыхăнăвĕ урлă чирлекенсем нумайрах. Апла пулсан чир çинчен пурин те лайăх пĕлмелле. Пĕлекен çын чиртен сыхланма пултарать.

Чире пĕр çынран теприне вирус куçарать. Вăл виçĕ майпа куçма пултарать. Пĕрремĕшĕ – ар çыхăнăвĕ урлă. Ку майпа вирус арçынран хĕрарăма та, хĕрарăмран арçынна та ерме пултарать. Кун пек чухне презервативпа усă курни çеç вирус ересрен сыхласа хăварать.

Иккĕмĕшĕ – юн е юн препарачĕсем урлă вирус пĕр çынран тепĕр çынна куçни. Вăл наркотиксене юна яракансем хушшинче анлăн сарăлнă. Татуировка тунă чухне те СПИД вирусĕ ерме пултарать.

Виççĕмĕшĕ – СПИД вирусĕ ернĕ е СПИДпа чирлĕ хĕрарăм хăйĕн ачине хырăмрах вирус ертсе çуратни. Урăхла нимĕнле майпа та СПИД вирусĕ пĕр çынран теприне куçма пултараймасть. Чирлĕ çынпа пĕр савăтпа усă курнипе, пĕр туалета çӳренипе, пĕр-пĕрне чуп тунипе, юнашар выртса çывăрнипе (ар çыхăнăвне тытмасан) чир ермест.

Чир ернĕ хыççăн инкубаци тапхăрĕ пуçланать. Вăл виçĕ эрнерен пуçласа виçĕ уйăх таранччenех пырать. Ку вăхăтра чирĕн паллисем те çук, анчах та чирлĕ çын вируса тепĕр çынна ар çыхăнăвĕ урлă ертме пултарать. Çын чирлипе чирлĕ маррине юн анализĕ туса тĕрĕслесе пĕлме пулать.

Вирус çынна пĕрре лекрĕ пулсан, унăн организмĕнче вăл çын мĕн виличченех пурăнать. Чирĕн малтанхи паллисем: ӳт температури ӳсет, пыр ыратать, тарлаттарать, лимфа узелĕсем пысăкланаççĕ.

Вирус ернĕ хыççăн 10-15 çултан СПИД тапхăрĕ пуçланать, организмшăн хӳтлĕх системи хавшать, вăл ытти инфекцисемпе кĕрешеймест, çынна темĕнле чир те ерме пултарать.

Чирлекенĕн ӳпке чирĕсем пуçланаççĕ, тĕрлĕ çĕрте шыçăсем тухаççĕ. Чирлĕ çын ырханланать, ӳт çине шатра тухать, нерв системи, вар-хырăм пăсăлать. Чĕрепе юн тымарĕсем япăх ĕçлеме пуçлаççĕ, çын психики улшăнать.

Шел пулин те, хальлĕхе чиртен сыхланма вакцина е сыворотка çук. Чиртен сыхланни, чирлеменни лайăх, ăна тума йывăр мар. Кашни хăйĕн умне чирлес мар тесе тĕллев лартнă çын çак чирпе чирлес çук.

**Г. СОКОЛОВА,**
**районти тĕп больницăн**
**врач-эпидемиологĕ.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Хура-шурă тĕслĕ икĕ хут пăрулантă ĕне сутатпăр. Оринин ялĕ. Тел.: 8-906-134-94-08.**

**БЫТОВАЯ ТЕХНИКА**
**по оптовым ценам на заказ: телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 5-8.**

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ**
**любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 5-8.**




**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид, доски, кирпич. При покупке керамзитобетонных блоков на остальной товар скидки.**
**Тел.: 8-960-307-41-78, 8-927-851-47-82. 3-3.**

**Июнь пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Ятман ялĕ, Матвеева Клавдия Федоровна. Тел.: 39-2-37.**

**Требуются рабочие на постоянную работу в мебельное производство. Зарплата от 4 тыс. рублей.**
**Тел.: 8-906-389-10-83. 1-2.**

**Меняю четырехкомнатную квартиру в г. Козловка (дом кирпичный, телефон, рядом усадьба с кирпичным сараем) на квартиру или дом в с. Моргауши.**
**Тел.: 44-01-68, 8-903-358-01-68. 1-4.**

**На постоянную работу ООО «Моргаушрайбыт» приглашает: парикмахеров; швей (требование: опыт работы); учениц швейного производства; мастера-наладчика швейных машин (образование и опыт работы не требуется).**
**Контактный телефон: 2-18-40.**
**Возможность профессионального роста, прогрессивная и своевременная оплата труда, по желанию работников в счет зарплаты выдача продукции сельскохозяйственного производства: зерно, солома по ценам производителя, также предоставляется полный соцпакет. 1-2.**

Милици хороникинчен

## Саккунпа килĕшӳллĕн ĕçлесчĕ

Шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекенсем тĕрлĕрен рейдсем, операцисем ирттереççĕ. Акă апрелĕн 16-мĕшĕнче “Контрафакт” операци ăнăçлă иртнĕ. Акă Муркаш салинчи пĕр предприниматель тивĕçлĕ документсемсĕрех DVD тата CD (MP3) дисксемпе сутă тунă. Çакă пакунлисене тивĕçтермен, çавăнпа та РФ КОАПĕн 7.12 статйипе протокол çырма тивнĕ.

## Çын пурлăхĕ илĕртет-и?

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Хуракасси ялĕнчи Пасар урамĕнчи 36 çулхи арçын сунара тухнă. Çук, пăшал çакса мар, урапа тĕксе. Ара, ытла нумай пурлăх “пĕçертсе” тухнă та. Хăй пурăннă урамри пускилти пурăнмалли çуртăн çăрине çĕмĕрсе кĕнĕ. Унтан вара 70 тата 30 литр кĕрекен хурансем, икĕ таз тата ванна илсе тухнă. Пускил тăванран та хаклăрах теççĕччĕ те халăхра, 36 çулхи арçыншăн вара пурлăх пахарах пулнă. Хăй пирки пуçарнă уголовнăй ĕçпе паллашсан, тен, вăл урăхларах шутлĕ.

Каç сĕмĕ килнĕ май алăксене тĕплĕнрех çаклатса “сенкер экран” умне кĕрсе ларатпăр. Кукăр алăллисем вара усă сывлăшалла туртăнаççĕ пулас. Ара, çын пурлăхне хапсăнас шухăш-туйăм канлĕ ларма парать-и вара? Акă Чураккасси ялĕнче пурăнаканскер, урама машинине тĕрĕстĕкел лартса хăварать. Ак тамаша, ВАЗ-21099 маркăллă 493ВО 21RUS регистраци номерлĕ автомашинăн икĕ кустăрми хуçине алă сулса хăварма та ĕлкĕреймен. Халĕ вара çав правур çын пирки пакунлисем РФ УК 158 статйин пĕрремĕш пайĕпе уголовнăй ĕç пуçарнă.

Акă тата Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Тури Панкли ялĕнчи 16 тата 18 çулхи яшсем кавар тăваççĕ. 21 сехетре Вăрманкас-Тăрăн ялне вăрă шухăшĕпе çитеççĕ. О 978 ВЕ 21RUS регистраци номерлĕ ВАЗ-2104-3 маркăллă автомашинăран АИ-92 маркăллă бензин 10 литр чухлĕ юхтарса илеççĕ. Халĕ вара Тăван çĕршыва хӳтĕлес çула çитнĕ яшсем пирки РФ УК 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă.

Йĕркене пăснă тепĕр тĕслĕх те Йӳçкасси ял тăрăхнех кĕрет. Вăрманкас ялĕнчи 22 çулхи яш ытла та çивĕч куçлăскер пулнă пулас. М 318 ВЕ 21RUS регистраци номерлĕ ВАЗ-2104 маркăллă автомашинăна питĕрменнине тата тапратмалли уççийĕ çавăнтах пулнине асăрхать. Катаччи чупма юратаканскер, нумай шутласа тăмасть, “хурçă утпа” Муркаш салинелле çул тытать. Халĕ вара катаччи чупакан пирки РФ УК 166 статйин пĕрремĕш пайĕпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Авă еплерех пулса тухать харпăр хăйне ытла ирĕке ярсан. Патак икĕ вĕçлĕ теççĕ те пĕр вĕçĕ вара хамăрах пырса тивет.

Ах, ытла хăвăрт улшăнса пыратпăр пулмалла. Намăс, совеç пирки пачах шутламасăр çынна пĕр сăлтавсăрах кӳрентерме, хирĕçме те именместпĕр. Асатте-асаннесем çын çинчен çиччĕ шутламалла, хăвăн çинчен – пĕрре, тетчĕç. Тен, паянхи пурнăçра çавна пĕлеймиех пултăмăр иккен.

Акă Муркаш райповĕн Нискассинчи апат-çимĕç лавкки хыçĕнче паллă мар çын 30 çулхи арçынна çĕçĕпе чиксе хăварни пуçа ниепле те шăнăçаймасть. Çак ĕç 22 сехетре пулса иртнĕ, каç сĕмĕнче вара çынна уйăрма май пулман. Çапла вара йывăр суранланнăскерне Муркашри тĕп больницăн реанимаци уйрăмне илсе çитерне. Ку ĕç пирки РФ УК 111 статйин пĕрремĕш пайĕпе уголовнăй ĕç пуçарнă.

**Шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5. Тел.: 2-13-80**




Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ, халăх вĕрентĕвĕн ĕçченĕсен профсоюзĕн районти организацийĕн канашĕ пай методисчĕн Э.Э. Ефремован

**АШШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки хурланса пĕлтереççĕ.

Отдел сельского хозяйства администрации Моргаушского района, райком профсоюза работников АПК, коллеги по работе выражают глубокое соболезнование главному зоотехнику СПК «Чемеево» Тимофеевой Ф.П. по поводу безвременной, скоропостижной кончины супруги

**ТИМОФЕЕВА**
**Николая Михайловича.**

«Чемеево» СПК коллективĕ кунта тĕп зоотехник пулса ĕçлекен Ф.П. Тимофееван мăшăрĕ

**Николай Михайлович**
**ТИМОФЕЕВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика,
село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36,
заместитель главного редактора - 2-12-82,
бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни,
социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3511.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 18.05.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.